# Юрӑ-кӗвӗ ӑсти



## А. Асламас композитор 50 ҫул тултарчӗ

Вӑрманкас Асламас таврашӗ авалтанпах юрӑллӑ ҫӗршыв пулнӑ. Ку тӑрӑхра революци хыҫҫӑнах халӑх хорӗсем йӗркеленме пуҫлаҫҫӗ. Сӑмахран, Турай хорӗ хӑйӗн малтанхи концертне Совет влаҫӗ пӗр ҫул тултарнӑ куна халаллать.

Анчаккасси улӑхӗнче акатуй вӑййисем тата! Вӗсем темиҫешер куна тӑсӑлнӑ, кунта, тӗрлӗ тӗслӗ чечекпе йӑлтӑрса тӑракан ҫурхи вӑрман уҫланкинче, иртен пуҫласа ҫӗрлеччен чӑваш кӗслипе хуткупӑс сасси янӑранӑ, хӗрсен юррисем таҫта ҫити сарӑлнӑ...

Ҫакӑнта иртнӗ чӑвашсен талантлӑ композиторӗсенчен пӗрин Анисим Васильевич Асламасӑн ачалӑхӗ.

Пиччӗшсене кура пӗчӗк Унисӗм те улттӑрах алла хуткупӑс тытать, вунвиҫҫе ҫитсен Шупашкарти музыка техникумне вӗренме кӗрет. Тепӗр икӗ ҫултанах хӑйӗн пирвайхи юррине кӗвӗлет. Вӑл, «Сарӑ хӗр» ятлӑскер, чи малтанхи те чи илемлӗ пулса юлать. Ӑна композитор, нумай ҫул иртсе кайсан, хӑйӗн «Шуршӑл тӑхлачи» музкомеди валли анлӑлатса илемлетет. Мӗнле юрӑҫӑ хумханмасӑр юрлама пултартӑр ҫак чун-чӗрене тыткӑнлакан «Надя юррине?»

Анисим Асламас юрӑсем ӑста ҫыракан композитор пулни халӗ ӗнтӗ каламасӑрах паллӑ. «Сӗрме купӑс» (сӑвви В. Урдашӑн), «Савӑнӑҫ юрри» (сӑвви В. Давыдов-Анатрин), «Анлӑ Атӑл хӗрринче» (сӑвви Г. Харлампьевӑн), «Миршӗн кӗрешекенсен юрри» (сӑвви С. Шавлин), «Астӑватӑп» (сӑвви М. Волкован), «Пирӗн ялӑн хӗрӗ» (сӑвви П. Хусанкайӑн), «Шурӑ хурӑн» (сӑвви Г. Орловӑн), «Лантӑш» (сӑвви Ю. Петровӑн) юрӑсем халӑхра анлӑн сарӑлнӑ. Вӗсене профессионалсем те, художество пултарулӑх участникӗсем те юратса юрлаҫҫӗ.

Ленин теми А. Асламас творчествинче хӑйне уйрӑм вырӑн йышӑнать. Композитор халӑхсен вилӗмсӗр ҫулпуҫӗн сӑнарне музыкӑра уҫса парас енӗпе нумайранпа ӑнӑҫлӑ ӗҫлет.

Анисим Асламас ҫулпуҫ ҫинчен ҫырнӑ произведенисенчен паллисем ҫаксем: «Ленин» оратори (сӑвви С. Шавлин), «Ленин проспекчӗпе», «Ленин палӑкӗ умӗнче» (сӑввисем Г. Ефимовӑн), «Чаплӑ-ҫке апрель» (сӑвви В. Алендейӑн), «Аслӑ Ленин ҫулӗпе» (сӑвви Н. Сандровӑн), «Ленинпа утатпӑр ҫӗнтерсе» (сӑвви А. Лукинӑн).

Тӑван ҫӗршыв, парти, халӑхсен туслӑхӗн темисем те композитор чӗрине ҫывӑх. Ҫакна «Савнӑ ҫӗр, чӑваш ҫӗршывӗ», «Вырӑс халӑхӗ, эс аслӑ» (сӑввисем П. Хусанкайӑн) юрӑсемпе паллашсан курма пулать.

Анисим Асламас чӑваш халӑх юрӑ творчествине ҫав тери юрататакан, ӑна тарӑн ӑнланакан композитор. Ҫакна эпир вӑл хӗрарӑм квартетчӗ валли йӗркеленӗ халӑх юррисенчен тата «Пушнар юррисен» ярӑмӗнчен аван туятпӑр. Автор кӗвӗсен илемне, вӗсен хӑйевӗрлӗхне упрама пӗлет, наци колоритне кӑмӑллӑ та ырӑ тӗссемпе эрешлет.

Композитор тӗрлӗрен инструментсемпе калама ҫырнӑ произведенисем те ҫакӑн ҫинченех калаҫҫӗ. Акӑ мӗн ҫырнӑччӗ нумай пулмасть «Советская музыка» журнал А. Асламасӑн «Асаттесен юррисем» поэми пирки: «Поэма авалхи чӑвашсен йӑли-йӗркисен палӑрӑмӗсене пирӗн пата илсе ҫитерет, музыкӑра чӑвашсен асамлӑ кӗллисем, кӗтӳҫӗсем шӑхличӗ е шӑпӑр каланисем куҫкӗретех сисӗнеҫҫӗ. Вӗсем пӗрре туллин те анлӑн янӑраҫҫӗ, тепре, сасӑсен канӑҫсӑр куҫӑмне парӑнса, ҫиҫсе ялкӑшаҫҫӗ, выляҫҫӗ. Поэма ладсен тӗсӗсемпе пуян, ритмӗсемпе тӗрлӗ енлӗ. Аваллӑх музыкине автор ку чухнехи стиль пуянлӑхӗсемпе вырӑнлӑ эрешленӗ».

Анисим Асламас гобойпа симфони оркестрӗ валли ҫырнӑ концерт тата ксилофонпа фортепиано валли ҫырнӑ сюита пирки те ҫавнах каламалла. Вӗсенче эпир автор халӑхӑн ӗмӗр кивелми ылтӑн кӗввисене тӗлӗнмелле ӑсталӑхпа йӗркелесе аталантарнине туятпӑр, илтетпӗр.

Опера жанрӗнче А. Асламас тата та ытларах тӑрӑшса ӗҫлет. Вӑл паян кун тӑватӑ опера—«Киремет кати» (1960 ҫ.), «Вӗҫленеймен кӗвӗ (1962 ҫ.), «Ҫеҫпӗл» (1965 ҫ.), «Вера Саръялова» (1970 ҫ.) — авторӗ. Вӑл ҫавӑн пекех «Хӗвеллӗ кунсем» (1961 ҫ.), «Шуршӑл тӑхлачи» (1963 ҫ.), музыкӑллӑ комедисем ҫырнӑ. «Ленин» оратори, кантатӑсем, концертсем, квартетсем, вокалпа симфони поэмисем «Поэта асӑнса» тата 6 пайлӑ «Тилли юррисем» (сӑмахӗсем П. Хусанкайӑн), фортепианопа оркестр валли ҫырнӑ симфониллӗ поэма («Сентиерпе Пинерпи») тата ытти нумай тӗрлӗ хорсем, юрӑсем, романссем А. Асламас ҫав тери тухӑҫлӑ ӗҫлени ҫинчен калаҫҫӗ.

Нумай пулмасть композитор хӑйӗн пӗрремӗш симфонине («Космос симфонийӗ») ҫырса пӗтерчӗ. Ӑна вӑл чӑваш халӑхӗн мухтавлӑ ывӑлне Андриян Григорьевич Николаев космонавта халалланӑ. Умри чи ҫывӑх тӗллев—«Асаттесен юррисем» балетпа «Чӗмпӗр учителӗ» операна ҫырса пӗтересси.

Анисим Асламасӑн «Асаттесен юррисем» поэмине гобойпа симфони оркестрӗ валли ҫырнӑ концертне тата фортепианӑпа симфони оркестрӗ валли ҫырнӑ рапсодине халӗ пирӗн ҫӗршывра ҫеҫ мар, чикӗ леш енче те выляҫҫӗ.

А. Асламас Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ хыҫҫӑнах Киеври Ленин орденлӗ консерваторие кайса кӗрет, Б. Н. Лятошинский профессор класӗнче вӗренет. 1960-мӗш ҫулта Мускаври П. И. Чайковский ячӗпе хисепленекен консерваторирен вӗренсе тухать. Тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларманни, яланах ҫӗнӗлӗх шырани—ҫакӑнта композиторӑн творчествӑлла сӑн-сӑпачӗн уҫҫӑн палӑракан енӗ, вӑл А. Асламаса тӗрлӗ жанрсенче ӑнӑҫлӑ ӗҫлеме май парать.

Иван АХРАТ.